Николай ЕФИМОВ

# «ÇӐ̆РЕТӖП ЭПӖ ВӐРÇӐ ХИРӖНЧЕ...»



Қанăçсăр шухăш-кăмăлпа, хăй пуриннă чух Яков Гаврилович Ухсай çинчен хам пӗлнине вулакансене каласа кăтартайманшăн ӳкӗнсе те, çыратăп çак йӗркесене. Паян кун та ӗненессӗм килмест усал хыпара, анчах нимӗн тума та çук, пултаруллă сăвăç текех çук пирӗн хушăра. Эппин, мӗншӗн пӗрехмай тăсса пытăмха калас сăмаха каламасăр, капланса килекен асаилӗве-шухăшăма ыттисене пӗлтермесӗр? Яланах чӗрӗ пулӗ терӗм пулинех, вăрçă терт-нушине ытлăн-çитлӗн активнӗ фронтри тусăм Яков Гаврилович пурнăçран уйрăлса каясса шутлассăм килмерӗ-тӗр çав.

1985 çулта, Я. Г. Ухсай Мускава РСФСР писателӗсен съездне килсен, çак курнăçу юлашки пуласса шутланă-ши эпӗ? Урăхран тӗл пулаймасса туймарăм мар-ха, çавăнпах пулӗ «Россия» гостиницăна ун патне кашни кунах çӳрерӗм. Сăмахăмăр пине çитрӗ поэтпа иксӗмӗрӗн. Ачалăхӗ, çамрăклăхӗ, пысăк литературăна еплe килни, сăвăçăн тăван халăхӗ, чӗлхи, историйӗ çинчен ытларах та ытларах ыйтса пӗлме тăрăшрăм. Литература лаççинче пӗрле ӗçлекен тус-тантăшӗсем, вӗсен пултарулăх ӗçӗнчи вăйӗ-сумӗ, çамрăксем — нумай-нумай ыйту интереслентерчӗ мана. Ытла та çывăх туяттăм чăваш сăвăçне, хисеплеттӗм. Ун патне час-час çӳренин сăлтавӗ те пысăкчӗ, Яков Гавриловичпа эпӗ пӗр фронтра 1944 çултанпа пӗрле пулнă-çке-ха.

Çав тери шел, урăхран эпир, чăнах та, курнăçаймарăмăр. Эппин, фрнтри юлташăм çинчен мӗн пӗлнине ыттисене тӗрӗссипе каласа пама тивӗç эпӗ.

Пӗр çын теприне килӗштерме, хисплеме-юратма пуçласси мӗнрен килнине кам ăнлантарса пама пултарайӗ-ши? Тен, малтанласа сăн-пичӗ, шухăш-кăмăлӗ, сасси, кулли, мӗнле тумланни, пуçласа сăмах хушни тыткăнлать пулӗ? Ку ыйтăва никам та уçăмлăн хуравласса шанмастăп эпӗ. Хам та татса пама шутламастăп. Çакна çеç пӗр пытармасăр тӗрӗссипе калăртам: Ухсайпа иксӗмӗр пӗр-пӗрне, пуçласа курнă самантранах, тӳрех килӗштертӗмӗр.

1944 çул пуçламăшӗ. 1-мӗш Украина фрончӗ. Эпӗ ун чухне 1-мӗш гварди танк армине кӗрекен 31-мӗш танк корпусӗн кашни кунах тухса тăракан «На штурм» хаçат редакцийӗнче ӗçлеттӗм. Ку армие паллă совет çар начальникӗ, каярахпа бронетанк çарӗсен маршалӗ, икӗ хут Совет Союзӗн Геройӗ Михаил Ефимович Катуков ертсе пыратчӗ.

Курск пӗккинчи хӗрӳ çапăçусем хыççăн пирӗн танкистсем «сивӗнме» те ӗлкӗреймен-ха. Пехотăпа тата артиллерипе пӗрле вӗсем, татăклă наступлени пуçласа, Белгородчинăпа Украинăри чылай ял-хулана ирӗкеқăларнă. Палăртнă задание чыслăн пурнăçланă пирӗн салтаксем. Анчах, шел пулин те, пысăк çухатусем тӳсме тивнӗ, чылай совет салтакӗпе офицерӗ çапăçу хирне выртса юлнă.

Шăпах ӗнтӗ корпус чаçӗсемпе подразделенийӗсем йывăр çапăçусем хыççăн кăштах сывлăш çавăрса янă хушăра, тăван çӗре нимӗç фашисчӗсенчен малалла тасатма хатӗрленнӗ чухне, пырса çитрӗ те пирӗн редакцие Ухсай. Хамăрăн ответлă редактортан, Михаил Александрович Усов подполковникрен — фронт политуправленине Яков Гавриловича илме шăпах вăл кайнăччӗ — Ухсай çинчен кăшт-кашт пӗлкелеттӗмӗр ӗнтӗ: хăюллă та паттăр офицер-мӗн вăл, паллă литератор.

Хăйне курса паллашиччен шухăшпа ун сăнарне картлама тăрăшрăм: çӳллӗ те кӗрнеклӗ, тăпăл-тăпăл пӳсиллӗ çын пулма кирлӗ вăл. Паллах ӗнтӗ, Ухсай Яккăвӗ пек пултаруллă сăвăç лăс-лăс кăтра çӳçлӗ, кăмăлӗпе хавхалануллă çын пулӗ. Çӳрессе те ыттисем пек мар, пуçне ярт тӳрӗ тытса çӳрет-тӗр... Кăштах айванларах та-и, тен? Пулӗ! Романтикăлла шухăш-кăмăллă çамрăклăх хăй çапла ӗнтӗ вăл—кăштах ӳстеререх кăтартать...

Кӗтнӗ тӗлпулу. Акă вăл, ман умра тăрать: пачах та малтан шутланă пек мар, кӗлеткипе лутрарахскер, уçă пит-куçлă чăваш хресчен ывăлӗ. Çитменнине эпӗ, çар çынни, пирӗн пата килсе çитнӗ офицерăн çар çипуçӗ кăштах шалпартараххине асăрхарăм, гимнастерки те хуçине пит çыпăçуллах мар пек, кӗсйисене вара туллиех блокнотсемпе тултарса лартнă.

Çапла, сăн-сăпачӗпе пачах та эп малтан шутланă пек пулмарӗ Ухсай Яккăвӗ. Тулаш енчен пăхсан, пӗрре те çар çынни тӗслӗ курăнмарӗ. Анчах тем самантран малтанхи туйăм лапах сӳнчӗ. Тепӗр темиçе минутранах эпӗ çар редакцине ӗçлеме килнӗ çӗнӗ офицерăн шалтан тапса тăракан вăйне пӗтӗм чун-чӗрепе туйса илтӗм. Ман çине пысăк та çивӗч, пурне те хăвăрт ăнкарса-сиссе илекен куçӗсемпе витерсе пăхса илчӗ вăл. Темӗнле хăйнеевӗр çутă сапатчӗ мăшăр куçӗ, илӗртӳллӗн çунатчӗ.

Эпир харăссăн пӗр-пӗрин патнелле ярса пусрăмăр, йăл култăмăр, темшӗнçке, пӗр-пӗрне алă парса саламлас вырăнне, сасартăк ыталанса илтӗмӗр. Çак самантран пуçланчӗ те пирен хушăри хурçă пек çирӗп, фронтра пиçӗхнӗ, хӗрӗх çул ытла — мӗн Ухсай куçне хупиччченех тăсăлнă — чăн-чăн туслăх-юлташлăх.

Яков Гаврилович манран вунă çул аслăччӗ. Çамрăк чухне вара çак уйрăмлăх ытла та нумая пӗлтерет иккен. Вăл Сталинградри хаяр çапăçусенче хыпарсăр çухалнă манăн Петр пиччерен те аслăрахчӗ. Çавăнпах пулӗ эпӗ Ухсая хамăн тăван пиччене хисепленӗ пекех хисеплеттӗм, юраттăм. Пире çывăхлатаканни татах пурччӗ темелле: биографире те, шухăш-кăмăлта та, ӗçе епле тăрăшса тунинче те.

Пӗррехинче, эпӗ Смоленск тăрăхӗнчи ялта, çитменнине, ун пекех хресчен килйышӗнче, çуралса ӳснине пӗлсен, Яков Гаврилович çав тери хӗпӗртерӗ:

— Куратăн-и, Коля, эпир пӗр-пӗрне хăвăрт хăнăхнин сăлтавӗ мӗнринe,—ыйтса та, çав хушăрах çирӗплетсе те каларӗ вăл.— Эсӗ Смоленск тăрăхӗнчен иккен. Çав вырăнсем маншăн та çывăх. Смолянсем — манăн чи лайăх туссем вӗт. Александр Твардовские пӗленех ӗнтӗ. Манăн чи лайăх тус вăл. Михаил Исаковский, Николай Рыленков тата! Тӗлӗнмелле лайăх, талантлă çынсем. Саша Твардовскипе вăрçăччченех туслашсаттăмăр.

Тытăнатчӗ вара Твардовский çинчен хӗрӳллӗн, хавхалануллăн каласа кăтартма.

— «Василий Теркина» вуланă-и? Халăх ăсӗ, шӳт-кулăшӗ вăл, тепӗр майлă каласан, Твардовский геройӗ—ытлашши нимӗнпех те палăрса тăман, хăйӗн хӗрӳ ӗçӗпе çӗнтерӗве çывхартакан пиншер совет салтакӗсенчен пӗри. Твардовский сăввисенче шухăшласа кăларни çук. Чăн-чăн халăх чӗлхипе çырать вăл. Чуна тыткăнлать! Вăт ку талант-тăк талант!

Эпӗ Ухсайпа килӗшмесӗр тăма пултараймастăм. Сехечӗ-сехечӗпе хатӗр вăл поэт пирки каласа кăтартнине итлеме. Мӗн чухлӗ çӗннине, халиччен илтменнине ăша хыватăп. Шел ӗнтӗ, паллă литератор пултарулăхӗпе творчествăри ӗçӗ-хӗлӗ çинчен нумаях пӗлейместӗмччӗ-ха. Шкул хыççăнах, 1938 çулта, хам ирӗкпе Хӗрлӗ Çар службине кайрăм. 1940 çулта, çар училищи пӗтернӗ хыççăн, взвод командирӗ пулса тăтăм. Вăрçă пуçлансан пӗрремӗш кунхинех — 1941 çулхи июнӗн 22-мӗшӗнче — çапăçăва кӗме тиврӗ. Литвара, çӗршыв чиккинчен вунпилӗк километрта çеç, пулса иртрӗ çакă. Каярахпа Латвие, Пскова, Новгород облаçне çитрӗм, Украина фронтӗнче Ухсай Яккăвӗпе тӗл пултăм. «На штурм» хаçат редакцине киличчен темиçе уйăх маларах çеç вара танк ротин командирӗччӗ. Ку вăхăталла эпӗ, çар ӗçне лайăх пӗлекен çын, самаях çыркалаттăм, пичетленеттӗм. Çавна курах пулӗ М. А. Усов подполковник мана редакцие ӗçлеме илчӗ. Маншăн çеç мар, Ухсайшăн та Михаил Александрович Усов ыррине нумай тунă. Яков Гавриловича подполковник питӗ хисеплетчӗ.

Пӗррехинче мана çапла каларӗ:

— Çар енӗпе ыйту-мӗн сиксе тухсан, пулăш эсӗ хăвăн çӗнӗ юлташна. Танкистсен терминологийӗпе паллаштар. Ухсая упрамалла. Вăл пăхма çеç çар çынни халь. Шухăш-кăмăлӗпе черченкӗ, çитменнине тата, хăшпӗр сăвăçсем пекех, тимсӗртерех те, фронт йывăрлăхне тӳсме йывăр ăна.

Телее, пурте ответлă редактор шутланă пек марччӗ пулин те (Ухсай нумай тӳснӗ-курнă çынччӗ, çапăçусенче пулнă, аманнă, çар хаçачӗсенче ӗçленӗ), ăна пирӗн пулăшу кирлӗччӗ. Пултарнă таран хаваслансах пулăшаттăм ăна: танк çапăçу хатӗрӗсем, техника çинчен каласа кăтартаттăм, танк подразделенийӗсен тактикипе паллаштараттăм. Пӗрле çапăçу вырăнӗсене каяттăмăр унпа тата ытти те.

Çав хушăрах хам та Ухсай Яккăвӗнчен нумай вӗренеттӗм. Пӗри — тепринтшӗн, тепри — пӗриншӗнччӗ эпир...

«На штурм» çар хаçатӗнче пурӗ те виçӗ корреспондент анчахчӗ. В. С. Разумный, Я. Г. Ухсай тата эпӗ. Яккун тивӗçӗ — 242-мӗш танк бригадин çапăçури ӗç-хӗлне çутатса тăрассиччӗ. Ку бригадăн командирӗ, Михаил Егорович Тимофеев полковник, Ухсай аслă лейтенанта кăмăлласа йышăнчӗ.

Тӳррипе каласан, çӗнӗ сотрудник пурсăмăра та килӗшнине палăртассăм килет. Редакцире вăл питӗ сайра пулатчӗ темелле, пӗрехмай батальонсемпе ротăсене тухса каятчӗ, салтаксемпе, офицерсемпе тӗл пулса калаçатчӗ, вӗсен пурнăçӗпе, фронтри шухăш-кăмăлӗпе интересленетчӗ. Темӗнле вăйпа, тен, чун-чӗре çепӗçлӗхӗпеши, салтаксене хăй майлă çавăрма пӗлетчӗ. Çавăнпа пулӗ унăн заметкисемпе тӗрленчӗкӗсем, очеркӗсемпе статйисем чӗрӗ ӳкерчӗксемпе пуянччӗ, вуланăçем вулас килсе тăратчӗ вӗсене. Ахальтен мар салтак çинчен çырнă пӗр-пӗр заметка е очерк çар медалӗнчен те хаклăрах, тетчӗç тепӗр чухне...

31-мӗш танк корпусӗн салтакӗсем çинчен Я. Ухсай çырнă пӗрремӗш очерк «На штурм» хаçатра 1944 çулхи апрелӗн 6-мӗшӗнче пичетленсе тухрӗ. Хальхи пекех астăватăп, «В осажденном танке» ятлăччӗ вăл, «Я. Никифоров», тесе алă пуснă. Савельев кӗçӗн лейтенант ертсе пыракан танк экипажӗн хăюлăхӗпе паттăрлăхӗ çинчен çырса кăтартнă вăл çак статьяра. Тăшман позицине атакăна çӗкленсен, гитлеровецсен артиллери батарейине хирӗç çапăçăва кӗме тивнӗ вӗсен. Вăйсем пӗрешкел мар, çапах та пирӗн танк экипажӗ, пехотăна фашист ункине татса кӗме май туса парса, тăшманăн темиçе орудине пӗтерме ӗлкӗрнӗ ӗнтӗ. Анчах Савельев танкне те спен кӳнӗ иккен лешсем. Павел Митюков механик-водитель куçран аманать, машинăна курмасăр, чуххăммăн тытса пыма тивнӗ унăн. Ак татах кӗтмен инкек — машина таран шăтăка анса каять, кам та пулин çитсе пулăшмасан, тухасса ан та шутла.

Гитлеровецсем хӗпӗртенӗ, анчах иртерех-ха. Экипаж гранатăсемпе çапăçать. Аптăраса ӳкеççӗ хайхи фашистсем — ниепле парăнтарма çук-çке ку совет танкисчӗсене. Совет танкне вут тӗртсе çунтарса яма шутлаççӗ вара,

